27-82



А. М. МИХХАЙЛӐВ

# ЂӐВАШ ҪӖРШЫВӖНЂИ ПРОМЫШЛӖННӐҪ

ОКТ̆АПӖРТИ РЕВОЉУТСИ
10 ҪУЛ ТУЛТАРНӐ ЙУПИ-
ЛЕЙ ЙАЂӖПЕ КӐЛАРНӐ

ЂӐВАШ РЕСПУПЛӖКӖНЂИ
КӖНЕКЕ КӐЛАРАК. УЙРӐМ
ШУПАШКАР ○ ○ 1927 ҪУЛ

ОКЍАПЁРТИ РЕВОЉУТСИ 10 ÇУЛ ТУЛТАРНӐ ЙУПИЛЕЙ ЙАЂӖПЕ КӐЛАРНӐ.

А. М. МИХХАЙЛӐВ

# ЂӐВАШ ÇӖРШЫВӖНЂИ ПРОМЫШЛӖННӐÇ

## ОКЍАПӖР РЕВОЉУТСИЙӖ ПУЛНИ 10 ÇУЛ ТУЛТАРНӐ ÇӖРЕ

ЂӐВАШ КӖНЕКИ УЙРӐМӖ
ШУПАШКАР—1927 çул

ĕçлесе, сутуилŭ мĕн туса пурăнакан сахал, мĕншĕн тесен пирĕн республĕкре хапрăк-савăтсем сахал, промышлĕннăç вăйсăр. Пирĕн республĕкре кашни 100 çынтан 96 çын çĕр ĕçлесе пурăнаççĕ, 4 анђах ытти ĕçпе пурăнаççĕ.

Халăх тоххођĕ йенђен илсен те, ĕççем çавнашкалах курăнаççĕ.

Вăрçăђђен çапла пулнă: кашни çул (вăтамран) йал хуçайстви—25 мĕлйун тенкĕллĕх йапала панă, алăсталăхпа вĕт промышлĕннăç—7 мĕлйун тенкĕллĕх, хапрăк-савăт промышлĕннăçĕ—3.800 пин тенкĕллĕх, тата тĕрлĕ çĕре кайса ĕçленипе 3 мĕлйуна йахăн тупăнса тăнă.

Кунта та епĕр пирĕн халăх хуçайствинђе промышлĕннăç пысăк вырăн йышăнса тăманнине куратпăр.

Апла пулсан, пирĕн промышлĕннăç çинђен питех калаçмалли пурши вăл?

Пур. Пирĕк промышлĕннăç çинђен хытах калаçмалли пур. Калаçассинђен тата ытларах ĕçлемелли нумай.

Ак пирĕн ђăвашсем хаљ çĕр ĕçĕпе анђах тенĕ пек пурăнаççĕ. Мĕскерлеши — пирĕн

ђăваш çыннин—вăтам хресђенпе, ђухăнăн пурăнăçĕ йăвăрши, йăвăр марши, çăмăлши? Вăл такамшăн та паллă: пирĕн ђăваш çыннин пурăнăçĕ йăвăр. Тăранађђен çимеллĕх тырри çителĕклĕ пулмасť, аш-пăш, сĕт-çу, çăмарта ђăваш çынни тутанмаллăх пек анђах çикелет, унăн çине-пуçне тăхăнмаллăх çителĕклĕ тумтирĕ çук. Пурăнăç нађарланса çитнĕ, калама та çук. Ђăваш йуррисене илсен те, ўлесе йĕрнĕ пек сассем ђас-ђасах илтĕнеççĕ.

Ăçтан килетши кун пек йăвăрлăх, хăçан пуçланса кайнăши вăл?

Вăл ак мĕнтен килет: пире çĕр пурăнма çителĕклĕ параймасť, мĕншĕн тесен пĕр йенђен пирĕн çĕрĕ питĕ сахал, тепĕр йенђен хамăр ăна лайăх, ăслăлăх кăтартнă пек ĕçлеме пултараймастпăр.

Пурнăçа йусаса йарас тесен мĕскер тумаллаши ĕнтĕ? Пурăнăç нађарри пĕр йенђен çĕр сахаллинђен килет, терĕмĕр. Анђах çĕре нумайлатма пултаракан майсем çукпа пĕрех, вăл йенђен çĕн çĕре куçарса йани, тата йурăхсăр çĕрсене йусани анђах пăртак пулăшса тăма пултарať, çапах та нумайлатасси çинђен питех калаçмалли те çук.

Пирĕн ҫавăнпа та ҫав пур пек ҫĕр ҫинҫе ытларах йапала тума тăрăшмалла. Ăна ҫĕре ҫĕнĕлле ĕҫлеме тытăнсан, анҫах тума пулаť. Ҫав ĕҫе кашни ҫĕр ĕҫлекен ҫыннăн тимлесе тытăнас пулаť, вара тин вăл ĕҫ акрономсемпе пĕтĕм правиттĕлствă пулăшса пынипе малалла кайĕ.

Ҫĕр ĕҫĕ пирĕн нумайранпа ĕнтĕ хĕнлĕхе кайнă. Пĕр вĕреннĕ ҫын, Шмоллер, калана тăрăх, ҫĕре виҫĕ пусă туса ĕҫленĕ вăхăтра пĕр тăваткал ҫухрăм ҫĕр ҫинҫе 18 ҫынран пуҫласа 37 ҫын таранҫҫен анҫах ҫителĕклĕ пурăнма пултараť. Пирĕн—Ҫăваш Республĕкĕнҫе хаҫ кашни тăваткал ҫухрăм пуҫне 56 ҫынна йахăн тивет. Хăвăрах шухăшласа пăхăр ĕнтĕ: 37 ҫын вырăнĕнҫе 56 ҫын пурăнаҫҫĕ пулсан, вĕсем ăҫтан ҫителĕклĕ пурăнҫҫăр ĕнтĕ.

Кашни тăваткал ҫухрăм пуҫне 37 ҫын ытла тиве пуҫлани вăл ҫылайранпа килет. Кĕтерин патша вăхăтĕнҫех ҫăвашсен арҫын ҫун пуҫне 4 теҫеттин анҫах тивнĕ, ытти вырăнсенҫе ун ҫух ҫĕр йепле аслă пулнă!

Ҫăвашсен ҫĕр сахалли вăл вырăс патшисем вĕсене хĕстерсе савăлласа лартнинҫен килет.

Ҫав тахҫантанпа пулса пухӑнса пынӑ йавӑрлӑхсене пирӗн йепле те пулин сахалтарах вӑхӑтра пӗтерсе, пурӑнӑҫа йусаса йарас пулаттӑ.

Анђах пӗр ҫӗр ӗҫне кӑна йусанипех ҫитмест.

Пирӗн респуплӗкре ытлашши ҫын вӑйӗ 40 пинрен те иртет. Ҫав 40 пин ытлашши ҫын халӑх хуҫайствине сийенрен пуҫне ним те памаҫҫӗ халђ.

Ҫӗр ӗҫне кирлӗ таранах йусаса йарсан та, ҫапах та ҫав ытлашши вӑй вырнаҫайас ҫук, ҫапах та ҫӗр пирӗн респуплӗке кирлӗ таран пурлӑх парас ҫук.

Халђхи вӑхӑтра пирӗн респуплӗкрен тӗрлӗ таварсене нумайӗшне ђӗрӗллех турттарса кайаҫҫӗ. Пирӗн патран мӗн ђул вӑрман ђӗрӗлле кайаттӑ. Тир, тапак, ҫӗтӗк тата ытти таварсем те. Пирӗн, сахал пулин те, ҫапах та ҫӗр ӑшӗнђе выртакан кирлӗ йапаласем те пур. Фосфорит, торф, тӑмсем, слантсӑ т. ыт.

Ҫав йапаласем халђ пирӗн респуплӗке кирлӗ таран усӑ параймаҫҫӗ. Вӗсене кунта ӗҫлесе хаклӑрах таварсем туса сутсассӑн, респуплӗкшӑн усӑ ытларах пулнӑ пулӗђђӗ: пӗр йенђен укҫа ытларах кӗнӗ пулӗђђӗ, тепӗр йенђен кунти ҫынсем ӗҫ тупнӑ пулӗђђӗҫ.

Çавăнпа та пирĕншĕн промышлĕннăçа. шултрине те, вăтаммине, вакки-вĕттине те, вăйлăлатса йарас ĕç питĕ пысăк ĕç пулса тăраӗ.

Пирĕн республĕккă хуçайствин сăнĕ маларшне нумай улăшăнмалла пулаӗ.

**Ĕлĕк ђăваш çĕршывĕнђе промышлĕннăç ма ӳсмен.**

Ак хамăр çумри Ђулхула кĕпернинe пăхарха: унта промышлĕннăç пирĕн пек мар, вăйлă, темĕн ђухлĕ хапрăк-савăт, тем ђул ĕçлекен. Унта промышлĕннăç ӳссе вăйланса кайнă, пирĕн патра ун пек пулман.

Мĕншĕнши вăл?

Истори кăтартнă тăрăх, ĕлĕк ђăвашсем хĕвелтухăçпе те, хĕвеланăçпе те, кăнтăрлапа та вăйлă сутă тунă, промышлĕннăç та вĕсен хушшинђе ђылай аталанса пынă, вакки-вĕтти те анђах мар, шултăри те: кимсем тăвас ĕç, тир-сăран ĕç, тимĕр-пăхăр ĕç т.ыт. Ђăваш хушшинђе тĕрлĕ маçтăрсем нумай пулнă. Ĕлĕк авал, славенсем çăпатапа çӳренĕ вăхăтра пăлхарсем (ђăвашсем) атă тăхăнса çӳренĕ.

Кайран çав авалах пуçланса кайнă промышлĕннăç ма ӳсмен, ма пăђланса ларнă пулаӗха вăл?

Вырӑс патши тарҫисем ҕӑвашсене лайӑх вырӑнсенҕен, шыв хӗррисенҕен, хуласенҕен хӑваласа кӑларса йараҫҫӗ, вӗсене пулӑ, кайӑк таврашӗ тытма та, вӑрман касма та ҕараҫҫӗ, арман таврашсем ҫине пысӑк куланайсем хураҫҫӗ: вара армансем те хупӑнса лараҫҫӗ; хӑшхӑш ӗремесе ҕӑвашсене ирӗксӗр пӑрахтараҫҫӗ (тимӗр, йӗс ӗҫӗ), хресҕен алӑсталӑх йапалисене: тӑлла, пир, ҫӑпата, крепле, кӗреҫе таврашӗсене хуласенҕен, йармӑркӑсенҕе хӑйсене тухса сутма ҕараҫҫӗ, тӗрлӗ хресҕен йапалисене те: ҫу-шур, кӗрпе, ашпӑш, ҫӑнӑх, хур-кӑвакал— ҕӑвашсем вырӑс хуҫасене анҕах сутма пултарнӑ, панкӑсенҕен ҕӑвашсене укҫа таврашӗ паман, вӗсем пысӑк проҕҕӑнпа улпутсенҕен, хуҫасенҕен анҕах илме пултарнӑ, хресҕенсене калама ҫук пысӑк куланай тӳлеттерсе сӑрӑхтарса тӑнӑ.

Кунти маҫтӑр ҕӑвашсене ытти ҫӗре ирӗксӗр илсе кайса пӗтернӗ: вӗсене партти-парттийӗпе карапсем тунӑ ҫӗре Атӑл, Тон, Палтти тинӗсӗ ҫине, Аҫтӑрхана, пулӑ тытнӑ ҫӗре тата ытти ҫӗрсене те илсе кайнӑ. Аслӑ Петӗр, текен, патша вӑхӑтӗнҕе ҕӑвашсем хушшинҕен пӗтӗм тимӗрҫӗсене пуҫтарса тухса кайнӑ.

Çапла вара пĕтĕм суту-илӳ, промышлĕннăç, промысла, ĕремес ĕçĕсем вырăс хуçисем аллине кĕрсе ӳкнĕ. Вырăс патшалăхĕшĕн те, вырăс хуçисемшĕн те кунта промышлĕннăç ӳсни кирлĕ пулман. Кунти ђĕр тавара ытти çĕрти савăтсене илсе кайнă, хуçасем ахалех кăсйасене пысăк усламсем ђиксе тăнă.

Çапла вара ђăн авал ђăваш хушшинђе аванах ӳсме пуçланă промышлĕннăç сӳнсе ларнă, хуçайствăн ђĕлпĕрĕсем вырăс патшин тарçисем аллине кĕрсе ӳкнĕ. Лешсем ђăваш йунне ерешменсем пек ĕмсе тăнă. Ђăваш хуçайствин ђĕлпĕрĕсем патша тарçисен аллинђе пулнă пирки пирĕн хуçайствă çуллен çул сăрхăнса пырса, пĕтĕмпех пĕтсе ларас вĕçне çитнĕ, вăйлă промышлĕннăç çинђен калаçмалли те пулман.

## Ђăваш çĕршывĕнђе вăрçăђђен мĕнле промышлĕннăç пулнă.

Малтан патша влаçĕ кунта промышлĕннăç ӳсессине хирĕç пулнă пулин те, кайрантарах иртнĕ ĕмĕрте йулашки çулсенђе, кунта ĕçлекен вăй йӳнĕ пирки, тĕрлĕ хапрăк-савăтсем ларткала пуçланă.

Вăрçăђђен пирĕн респуплĕккĕре хапрăк-савăтсем, пысăккăраххисем, çаксем пулнă:

**Хăма çуракан савăтсем:**

1. Шупашкарта Йехрем савăђĕ,
2. Шупашкартан инçех мар, Атăл леш айăккинђе, Миљуттĕн савăђĕ,
3. Вăл савăтран инçех мар Пушкар савăђĕ,
4. Шупашкартан çӳлерех Атăл ку йенђе Коптар савăђĕ,
5. Унтан инçех мар Çӳктер савăђĕ,
6. Шупашкартан айалалла, Çителникăвă йал патĕнђе çав йал йатлă савăт,
7. Криуш савăђĕ, çав йатлă йал патĕнђе,
8. Куславкка патĕнђе Куславкка савăђĕ,
9. Йетĕрне уйесĕнђе Пантĕк патĕнђи савăт,
10. Çĕмĕрлепе Мĕçлет, унтах Улхаш савăђĕсем,
11. Йĕпреç уйесĕнђе Шăмăрш савăђĕ,
12. Унтах—Вырăс Ђуккал патĕнђи савăт,
13. Унтах—Йĕпреç савăђĕ,
14. Улатăр уйесĕнђе—Улатăрта виççĕ,
15. Унтах—Алтыш стантсинђи савăт,
16. Унтах—Нисовккă йал патĕнђи савăт,
17. Атăл хĕринђе тата туса пĕтермен сăвăт пулнă.

18 Йĕпреç уйесĕнђе Пуйинск савăђĕ.

19. Краснойарти савăт } Мари оплăçне кайнă.
20. Луковри савăт. }

**Йăваç каскалакан савăтсем:**

1. Урмар стантсинҫи сĕтелпукан хапрăкĕ,

2. Улатăр уйесĕнҫе, Карты текен йал патĕнҫе фанера савăҫĕ,

3. Вăрçă вăхăтĕнҫе вăрçă хатĕрĕсем тумашкăн савăт Шупашкарта туса лартнă.

**Хими промышлĕннăçĕ.**

1. Шупашкара хирĕç Атăл леш йенҫе скĕпитар савăҫĕ.

2. Тройар скĕпитар савăҫĕ. (Мари оплăçне кайнă.)

**Йалхуçайстви промышлĕннăçĕ.**

1. Йетĕрне патĕнҫи çу çапакан савăт,

2. Çавăнтах ереке савăҫĕ,

3. Шупашкарта ереке савăҫĕ,

4. Сĕнтĕр Вăрри патĕнҫе ереке савăҫĕ,

5. Улатăрта ереке савăҫĕ.

Тата савăт майлă пысăк армансем те ҫылай пулнă. Ун пек армансем Улатăрта виççĕ пулнă, Шăхран, Сĕнтĕр Вăрри, Пăраҫкав, Куславкка тата ытти вырăнсенҫе те пулкалана, мĕн пур 30 йахăн.

**Тимĕр ĕçлекен савăтсем.**

Тимĕр ĕçлекен савăтсемех пирĕн респуплĕкре пулман, пĕр пысăкрах маçтĕрскисем анҫах пулнă: пĕри Шупашкарта, тепри Улатăрта, виççĕмĕш Шăхасан патĕнҫе.

**Сăран савăҫӗ.**

Пысăкрах сăран савăҫӗ, Шупашкарта анҫах пулнă.

**Кӗнеке таврашӗ ҫапакан промышлӗннăç.**

Типокрафисем Шупашкарта, Çӗрпӳре, Йетӗрнере пулнă, анҫах вӗсем наҫарскерсем çеç пулнă.

**Пирӗн республӗкри промышлӗннăç мӗнле мӗнле таварсем туса кăларнă?**

Ак çакăн пек таварсем: тӗрлӗ хăма, паркет, йăвăç çăмӗ, фанерă, йешҫӗксем, сӗтелсем, пукансем, кăраваҭсем, скӗпитар, сăмала, çу, олифă, ерех, çăнăх, сăран, тӗрлӗ тимӗр таварсем.

Мӗн пурӗ 3.800 пин тенкӗллӗх.

Хапрăк-савăтсем пурӗ те тенӗ пекех хуçасем аллинҫе пулнă.

## Вăрçăсемпе выçлăх вăхăҫӗ.

Вăрçăсем вăхăтӗнҫе промышлӗннăç халсăрланнă çемӗн халсăрланса пыраҭ.

Пӗр йенҫен йусамасăр ӗçленипе çурҫӗсем те, машшинăсем те хавшаса пыраççӗ, тепӗр йенҫен ҫас-ҫасах ҫӗр тавар çитеймест, виççӗмӗш йенҫен ҫылай претприйаттисем*) (1921-мӗш

*) Хапрăк-савăтсем.

çулта 92) патшалăх аллине илнипе вĕсене тытса тăрса ĕçлеттерме пултаракан çынсем те сахал пулнă, тăваттăмĕш йенҫен выçлăх вăхăтĕнҫе апат çимĕç çук пирки ĕçлекенсем саланкалани те пулнă, унтан тата ĕçлеккеннисем те выçă пирки аран-аран анҫах ĕçлекеленĕ.

Çав вăхăтсенҫе виçĕ савăт çунса кайнă: Йетĕрнери, Улатăрти ерех савăҫĕсем тата Йĕпреçри хăма çуракан савăт.

1921-мĕш çулсем çинҫен Ĕçтăвком отҫоҫĕ ак мĕн калаť:

„1921-мĕш çулăн çурринҫен пуçласа, çимĕç çук пирки, Ҫăваш Оплăçĕнҫе нумай хапрăк-савăтсем ĕçлеме ҫарăнҫĕç. Вĕт промышлĕннăçпа алăсталăх промышлĕннăçĕсем те питĕ ҫакрĕç. Промыслă копператсийĕ, алăстаçсен пĕрлешĕвĕсем, ĕç артелĕсем саланса арканса пĕтнĕпе пĕрех. Кĕркуннепе хĕлле промышлĕннăçшăн татах ытла йăвăр пулҫĕ: савăтсем нумайĕшĕ ĕçлемерĕç, ĕçлекенсемпе слушăшҫисем çăкăр шыраса, саланса пĕтрĕç. Çак çулсенҫе пирĕн промышлĕннăç йапала тăвасси, вăрçăҫҫенхинҫен шутласан, 5—6 проҫҫăнран та иртмест“.

Тепĕр отҫот унтан та сахалтарах кăтартаť. Вăл ак мĕн калаť:

„Çак претприйаттисен йапала туни, вăрçăђенхинђен шутласан, 2—3 прођђăнран та иртмест пулмалла“.

Ку отђот алăсталăх промышлĕннăçĕ çинђен ак мĕн калаť:

„Алăсталăх промышлĕннăçĕ, выçлăх пирки, вăрçăђенхинђен шутласан, 1%-ран та ытла памарĕ, ђўк уйăхĕнђен пуçласа пĕтĕмпех ĕçлеми пулса ларђĕ. Выђăхпа ђĕр тавар çукки—пĕтĕмпех пĕтерсе хуђĕ“.

Çав тĕрлĕ йăвăр пулнă промышлĕннăçăн пурăнăçĕ вăл вăхăтра.

Анђах çапах та калас пулаť: вăхăт тем пек йăвăр пулнă пулин те, çав вăхăтра Шупашкарти типокрафийе пĕтĕмпех тенĕ пек çĕнетсе тунă, тата тепĕр типокрафипе електростантси тума хатĕрленĕ.

### Промышлĕннăç аталанаť.

Выçлăх вăхăтĕнђе антраса промышлĕннăç пирĕн нумай вăхăт ура çине тăрса çитеймерĕ. Тата тепĕр йенђен ак мĕн калас пулаť: пирĕн промышлĕннăç—вăл оплăç пулнă ђух, Хусан кĕпĕрнинђен хăйне тивĕçлĕ тыткаламалли йапаласем илсе тухайман, промышлĕннăçа йусама çавă та кансĕрлесе тăнă.

1922-мӗш çул пуçланнӑ çӗре Халӑх Хуçайствин Канашӗ аллинҫе 91 хапрӑк-савӑт, арман-мӗн пулнӑ. Ҫасах вара нумайӗшне ӗлӗкхи хуçисене тавӑрса памалла пулнӑ. Ҫав çулах çуркунне патшалӑх аллинҫе пӗр 30-шӗ анҫах йулаççӗ: 17 хӑма çуракан савӑт, 6 арман, 1 çу çапакан савӑт, 1 йӑвӑç каскалакан савӑт, 1 тимӗр ӗçӗн маçтерскийӗ, 1 тир савӑҫӗ, сӗтел-пукан хапрӑкӗ, тата типокрафи. Кусем ун ҫух пур те Халӑх Хуçайствин Канашӗ аллинҫе пулнӑ.

Кӗркуннерехпе промышлӗннӑçа хамӑрах йусас шанҫӑк пӗтет пулмалла та, Атӑл çинҫи ҫи лайӑх 5 савӑта мӗн пур пурлӑхӗпе „Средневолголес" текен треса, типокрафийе Кӗнеке Кӑларакан Уйрӑма параççӗ, ыттисене хӑшне пӗрне тара паркалаççӗ. Ҫапла вара Халӑх Хуçайствин Канашӗ аллинҫи промышлӗннӑç сапаланса пӗтет, лешӗ çара çӗре, тенӗ пек тӑрса йулаҭ.

„Средневолголес" текенни ӑна панӑ савӑтсене ӗçлеттерес вырӑнне унта пур пек йапаласене анҫах туртарса кайса пӗтере пуçларӗ, 100 пин тенкӗллӗх ытла илсе кайрӗ пулмалла.

Вара пирӗн промышлӗннӑç пуçтарӑнма аталанса йусанма 23—24-мӗш çулта тин тытӑнаҭ.

Ĕçтăвком „Средневолголес“ ĕçĕсене кура, савăтсене кайалла илет, анҫах вăл вăхăта çав савăтсенҫе тыткаламалли йапаласем сахал йулаççĕ.

Вăрман промышлĕннăçне пуçтарса, Ҫăвашлестрест туса хурат̆. Йетĕрне савăтне, Урмарти сĕтел-пукан хăпрăкне кашнине уйрăм устав çине куçарса трестсем пек ĕçлеттерме тытăнат̆. Патшалăх суту-илӳне пĕрлештерсе „Пайторк“ туса хурат̆. Скĕпитар савăҫĕпе тир савăҫне Пайторка тара парат̆.

Пирĕн промышлĕннăç, çапла çаралса йулнăскер, хăйĕн ĕçĕнҫе укçа тенкĕ çитменнипе аптăраса тăнă. Тыткалама укçа тенкĕ çитменни ĕçе ӳстерме, сарма питĕ кансĕрлесе тăнă.

Çавăнпа та 1924 çулта Ĕçтăвком Тĕп Правиттĕлствăран хапрăк-савăтсене йусама тата промышлĕннăçа ĕçленĕ ҫух тыткалама 3 мĕлйуна йахăн укçа ыйтат̆. Вăл ĕçе тума йатарлатса Мускава çын йарат̆.

Вара çав ыйту тăрăх правиттĕлствă про мышлĕннăçа хăй ĕçĕнҫе тыткалама 600 пин тенкĕ парат̆. Иртнĕ çулта тата 400 пин тенкĕ парат̆. Çапла вара пирĕн промышлĕннăç сывлăша çавра пуçлат̆.

Промышлĕннăç аталаннă майĕпе панккăсем те укçа кивçен ытларах пара пуçлаççĕ.

1923 – 24-мĕш çултан пуçласа, унӡӡен арканса саланса пыракан промышлĕннăç ӳсе пуçлаӑ, çултан çул хăй майĕпе пысăк утăмсем тăва пуçлаӑ

Пирĕн промышлĕннăçăн пурăнăçĕ, ман шухăшпа, çав Йетĕрнери савăт иртнĕ çулсенӡе мĕнле ĕçлениненӡен аван курăнса тăраӑ. Ăна илсе пăхар-ха.

Вăрçăӡӡен Йетерне савăӡĕ 450 пин пăт вăрă ĕçленĕ. Ăна 100% выранне хурăпăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1919 | çулта— 29 | пин пăт | —53% |
| 1920 | çулта— 61 | пин пăт | —13% |
| 1921 | çулта— 74 | пин пăт | —16% |
| 1922 | çулта— 99 | пин пăт | —29% |
| 1922—23 | çулта—277 | пин пăт | —61% |
| 1923—24 | çулта—144 | пин пăт | —32% |
| 1924—25 | çулта—300 | пин пăт | —66% |
| 1925—26 | çулта—500 | пин пăт | —110% |

Халăх Хуçайствин Канашĕ аллинӡи пĕтĕм промышлĕннăçа илсен те, епĕр ӡылай ӳснине куратпăр. Епĕр малашне пĕтĕм промышлĕннăç çуллен мĕн ӡухлĕ тавар кăларнине илсе пăхăпăр. Пирĕн алăра 1923 çулӡӡенхи ӡыхвăрсем (укçапа шутлани—ун ӡух çирĕп укçи те пул-

ман) ҫук, ҫавӑнпа епӗр 1923—24 ҫултан пуҫласа анҫах илӗпӗр.

1923–24-мӗш ҫулта Халӑх Хуҫайстви Канашӗ аллинҫи промышлӗннӑҫ тавар, вӑрҫӑҫҫенхи хакпа—шутпа, 750 пин тенкӗллӗх тунӑ.

1924—25-мӗш ҫулта 1.800 пин тенкӗллӗх,

1925—26-мӗш ҫулта 2.800 пин тенкӗллӗх, хаҫхи шутпа 5 мӗлйун тенкӗллӗх ытла. Кӑҫал унтан тата ытларах пулаҭ пулмалла.

Майӗпе ӗҫлекенсем те ӳссе пыраҫҫӗ. Вӗсем хушшинҫе ҫӑвашсем те ҫулленех нумайланаҫҫӗ. Ӗҫлекенсене ҫӑвашран хатӗрлеме 2 хапрӑк-савӑт шкулӗ уҫнӑ: Пӗри Урмарти хапрӑкра, тепри Шупашкарти типокрафинҫе. Вӗсенҫе ҫӑваш аҫисем пӗр ҫӗре йахӑн хапрӑк-савӑт ӗҫне вӗренеҫҫӗ. Кӑҫал Шупашкарта тепӗр шкул уҫӑлаҭ.

Ӗҫ ӳсӗмӗ те ҫултан ҫулах ӳссе пыраҭ. Йетӗрне савӑтӗнҫе вӑл тӗлӗшрен епӗр вӑрҫӑҫҫенхинҫен иртерне ӗнтӗ. Урмар хапрӑкӗнҫе вӑрҫӑҫҫенхи патне ҫитетпӗр, вӑрман промышлӗннӑҫӗнҫе ҫитнӗ пулас пулаҭ, унта тӗллипаллипе калама йавӑр, мӗншӗн тесен вӑрҫӑҫҫенхи ҫыхвӑрсем ҫук.

Ӗҫ укҫи тӗлӗшӗнҫен те ӗҫ ҫулленех йусанса

пырат̆. Йетĕрне сават̆ĕнђе вăрçăђђенхинђен иртнĕ, Урмар хапрăкĕнђе çите пырат̆, вăрман промышлĕннăçĕнђе ирте те пырат̆ пулмалла.

Анђах тавар хакĕсене илсен, унта калас пулат̆, ĕç аван пынийех курăнмаст̆. Хаљ пирĕн тавар хакĕсене йӳнетес ĕç питĕ пысăк ĕç вăл. Йулашки çулсенђе пирĕн промышлĕннăç тăвакан тавар хакĕсем ђылай ӳсрĕç. Кăçал та сĕтел-пукан, хăш тĕслĕ ђус хăй хакĕсем ӳсрĕç, çу таврашĕн анђахрах ӳкрĕç. Сутакан хакне, ђăнах та, епĕр пуринне те ӳкертĕмĕр. Анђах вăл услама ђакарнипе кăна пулђĕ. Халăх Хуçайстви Канашĕн аллинђи промышлĕннăç иртнĕ çулсенђе, ик çул хушши, çуллен 300 пин тенкĕшер ытла услам парса тăђĕ. Вăл пирĕн промышлĕннăçа ура çине тăма ђылай пулăшрĕ.

Малашне тăвакан таварсен хăйсен хакне ӳкерме пĕтĕм вăйпа тăрăшас пулат̆.

Промышлĕннăçа вăй кĕрсе пынă майĕпе, хамăр та пăртак ура çине тăнă майĕпе, хапрăк-савăтсене те йусаса майлаштарма тытăнтăмăр.

Вăрçăсемпе выçлăх вăхăтĕнђе пирĕн хапрăк-савăтсем йапăхса çитрĕç: çуртсем те машшин таврашĕсем те кивелсе кайрĕç. Çӳлте кала-

нăђђĕ, тата хăшхăш савăтсем çунса йурăхсăра тухни те пулнă.

Хапрăк-савăтсене йусас ĕç хуллен çултан çул çакăн пек пулса пыђĕ.

1923—24-мĕш çулђђен йусама, тата ытти тăкаксене ђăтма Ђăвашлеспа Йетĕрне савăтне Ĕçтăвком пĕр çитмĕл пин пăта йахăн тырă пађĕ.

Хапрăк-савăтсене планлă йусас ĕç 1923—24-мĕш çултан анђах пуçланса кайрĕ.

Вăл çулне хапрăк-савăтсене йусас тĕлĕшпе 12.490 тенкĕ расхут тунă. Вăл шутра: Йетĕрне савăђĕ—4.101 тенкĕ, Ђăвашвăрмантресĕ—6.796 т., „Йетинствă" хапрăкĕ —1.592 тенкĕ.

Çав укçасемпе мĕн-мĕн тунă?

Йетĕрне савăтĕнђе арман, столовăй, тата лупас туса лартнă.

Вăрман тресĕнђе: Пуинскăри хăма çуракан савăтра икĕ хăма çуракан рамă лартнă, ĕçлекенсем вађђи клуп тунă, хăма çуракан сарайа аслăлатнă, тата ытти вак ĕçсене тунă. Коптаркка савăтĕнђе кирлĕ пек çуртсем лартнă.

„Йетинствăра" клуппа сарай тунă, тата ытти йапаласене пăртак йусанă.

Çав укçана опорот кăпиталĕпе ĕçлекенсен пурнăçне йусамалли шутран илнĕ.

1924—25-мĕш çулта 82.913 тенкĕ пĕтернĕ. Ăна опорот кăпиталĕнҫен (21.716 т.) çĕнетмелли кăпиталтан (59.800 т.), ĕçлекенсен пурăнăçне йусамалли кăпиталтан (1396 т.) илнĕ.

Вара çав укçапа Йетĕрне савăтĕнҫе çуртйĕрсене, машшин таврашĕсене йусанă, çĕнетнĕ, Кҫашихха стантсинҫе склатпа пӳрт тунă, тата савăтра рати тытакан стантси лартнă, мĕн пурĕ 54.113 тенкĕллĕх. „Йетинствăра“ çĕнĕ 50 лаша вăйлĕ, твикăттĕл лартнă, тата пăс хуранне йусанă — 15.896 тенкĕллĕх; Вăрман тресĕнҫе: Пуинск савăтĕнҫе ĕçлекенсем ваҫҫи касăрма, тата кантур ваҫҫи çурт лартнă, тата ытти ĕçсем те пулкаланă, Сӳктер савăтĕнҫе машшин таврашне йусанă, Мускаври кантур ваҫҫи çурт тунă,—мĕн пурĕ 12.903 тенкĕллĕх расхут курнă.

1925—26-мĕш çулта хапрăк-савăтсене йусас тĕлĕшпе 250 пин тенкĕ ытла пĕтернĕ.

Йетĕрне савăтĕнҫе тĕрлĕ çурт-йĕрсене йусанă, çĕнĕрен машшинсем лартнă—мĕн пур расхут 101.841 тенкĕллĕх пулнă.

„Йетинствăра“ çуртсемпе машшинĕсене йусаса 18.600 тенкĕ пĕтнĕ.

Ҫăвашвăрмантресĕнҫе йусас тĕлĕшпе мĕн

пур расхут 203.287 тенкĕллĕх пулмалла пулнă план тăрăх. Анђах вăл расхута трес пĕтĕмпех ђăтма пултарайман, пĕр 110 пин ытларах çеç расхутланнă. Вăл шутпа Сӳктер, Миђуттин, Кире, Пуинск, Алтăш савăђĕсене йусанă.

Çак ђыхвăрсенђен епĕр хапрăк-савăтсене йусас ĕç ытла та вăрахăн пынине куратпăр. Вăл йенђен пирĕн нуша пысăк. Хапрăк-савăтсем кивелсе пыраççĕ. Вĕсене йусамалла, тата çĕнĕрен те тумалла. Укçа-тенкĕ çителĕклĕ мар. Çавăнпа та пирĕн халђ, йусайман пирки, ĕçлемесĕр ларакан савăтсем те пур.

Çавна кура, мĕнле те пулин, вĕсене ђĕртсе йарас тесе, тата кăçал ђылайĕшне йусаççĕ.

Хамăр правиттĕлствă йышăннă план тăрăх Ђăвашвăрмантресĕ валђи — 603.537 тенкĕ, Йетĕрне савăђĕ валђи—104.369 тенкĕ, „Йетинствă“ вырăнне хапрăк тума мĕн пурĕ 1.500 пин тенкĕ ытла (кăçалах 518.506 тенкĕ), ереке савăђĕсене йусама 250 пин ытла кирли курăнђĕ. Тата халђ, йулашки вăхăтра, Халăх Хуçайствин Тĕп Канашĕ скĕпитар савăђĕ тума шут тытрĕ.

Çапла мĕн пурĕ мĕлйун çурă ытла тухаť. Ăна хамăр вăйпа ђатайас çукки паллах. Тĕпрен

те парасси ытлах куранмаст. „Йетинства“ выранне Çемерлере хапрак тума кăçалах парас çукки паларђе енте.

Çапла çав шухăшласа хунине пурне те кăçвл та тăвийас çук.

Ђăвашвăрмантресе пер 200 пин ытларахлăх, Йетерне савăђе 70 пинлех, тата ерех савăђесем 150 пинлехе йахăн тăваççе пуљ тесе шутлама пулат хаљ. Çапла кăçал хапрак-савăтсене йусас çере пер 400 пин ытларах петермелле пулат.

Кăçал çапла Сентер-вăрринђи ереке савăтне йусаса петеретпер. Йетернери çунса кайнă ереке савăтенђе çурђесене йусаса çитерме шухăш пур, машшин таврашне çитес çул йусаса петерсе савăта еçе йамалла пулат. Тата Урмарти хапрак ваљђи пер çене çурт тăватпăр.

Теп Çпирт Шупашкарти ереке савăтне йусаса еçлеттерме тытăнђе.

Çапла енте Халăх Хуçайстви Канашен алинђи претприйаттисенђен йусамаллисем армансем (Улатăрта) анђах пек йулаççе.

Кусемсер пуçне револђутси хыççăн Шупашкарта, Сентер-вăрринђе, Çерпуре електриђђества стантсийесем тунă, весем хаљ елек

нихçан електриҁҁёстваॅ çутти курман хуласене електриҁҁёстваॅ çутти парса тăраççĕ.

Шупашкарта çĕнĕрен тенĕ пек икĕ ҁылай пысăк типокрафи туса лартрăмăр. Тӳрех калас пулаॅт, Шупашкар пек хуласенҁе ун пек типокрафисем сахалтарах пулмалла ытти çĕрсенҁе. Вĕсем ҁăвашăн авалтан пыракан тĕттĕмлĕхĕпе çапăçас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем çулталăкне темиçе теçеткă кĕнеке, шурнал, тата хаçатсем ĕçлесе кăларса, ҁăваш хушшине ĕçлеме йарса тăраççĕ.

Кăçал епĕр промышлĕннăç тĕлĕшпе тата ик-виç савăнмалли йапала куртăмăр. Йĕпреç уйесĕнҁе Купӈа йатлă копператтив крахмал савăҁĕ, Шупашкарти вăрман ерттелĕ хăма çуракан савăт туса лартрĕç.

Епĕр респуплĕкри промышлĕннăçа пĕр патшалăх вăйĕпех туса вăйлăлатса йаратпăр, тесе шухăшламастпăр. Вăл ĕçре хресҁенсем те копператтивсем урлă нумай ĕçлемелле. Вăл тĕлĕшрен крахмал-мĕн савăҁĕсене, çавăн пек вакрах савăтсене, копператтивсем ҁылай тăвасса ĕмĕтленетпĕр. Çавăнпа та çав ик савăта хресҁенсем хăйсем копператтив урлă туни пирĕн респуплĕкри хуçайстваॅ ĕçĕнҁе вăл паллă вырăн

йышăнаҭ, çавăнпа та вăл ĕççем, хресҭенсем хăйсем пикенсе, хăйсем пуçласа тунăскерсем пире савăнтараççĕ.

Октăпĕр револҭутси пулни вунă çул тултарнă çĕре пирĕн шултăрапа вăтам промышлĕннăç çакăн пек курăнаҭ:

**Хăма çуракан савăтсем.**

Промышлĕннăçпа Сутуилӳ Комиссариаҭĕ аллинҭе—12, Çул Комиссариаҭĕн—2, уннах—тепĕр шпалă савăҭĕ, Шупашкар уйĕçтăвкомĕн—2, Йĕпреç уйĕçтăвкомĕн—2, копператтивсен—2, уйрăм çынсен—2.

**Йăвăç каскалакан савăтсем.**

Промышлĕннăçпа Сутуилӳ Комиссариаҭĕн—3.

**Хими савăҭĕсем.**

Промышлĕннăçпа Сутуилӳ Комиссариаҭĕн—1, тата тепре тума машшинсем Керманине саккас панă.

**Тир савăҭĕ.**

Промышлĕннăçпа Сутуилӳ Комиссариаҭĕн—1, уйрăм çынсен—3.

**Типокрафисем.**

Кĕнеке Кăларакан Уйрăмăн—2, виç уйĕçтăвкомăн—3.

**Тимĕр ĕçлекен маçтерски.**

Промышлĕннăçпа Сутуилӳ Комиссариаҭĕн—1, Çут Комиссариаҭĕн—2.

**Çу çапакан савăт.**

Промышлĕннăçпа Сутуилў Комиссариаҫĕн—1.

**Ерех савăҫĕсем.**

Промышлĕннăçпа Сутуилў Комиссариаҫĕн — 2, Тĕп çпиртăн—2.

**Сăра савăҫĕ (путылкка тултаракан).**

Ҫăвашсойусăн—1 (çĕнĕрен тунă).

**Тутлă кăвас савăҫĕ.**

Ҫăваш сойусăн—1.

**Тапак хапрăкĕ.**

Промышлĕннăçпа Сутуилў Комиссариаҫĕн — 1, уйрăм хуçасен—2.

**Пысăк армансем.**

Промышлĕннăçпа Сутуилў Комиссариаҫĕн — 4, тата уĕçтăвкомсемпе вулĕçтăвкомсен аллинҫе ҫылай.

**Електриҫҫĕства стантсийĕсем.**

Хула Совеҫĕсемпе уĕçтăвкомсенҫе—4.

**Ҫукун çул маçтерскисем.**

Çул Комиссариаҫĕн—2.

## Вак промышлĕннăç, аласталăх промышлĕннăçĕ, ĕремессем.

Вак промышлĕннăç, аласталăх промышлĕннăçĕ тата тĕрлĕ ĕремессем ҫăваш çĕршывĕнҫе

ĕлĕк вăл йенђен темĕн ђухлĕ хĕсĕрленĕ пулин те, çапах, çĕр сахал пирки, ђылай ĕрђесе кайнă. Пуринђен ытла ђăпта çапас ĕç сарăлса кайнă. Вăрçăђђен хаљхи Ђăваш респуплĕкĕ вырăнђе ђăпта, ракуша таврашĕ çуллен 15 мĕлйуна çитеђђен хатĕрленĕ, теççĕ. Ђăпта çапасси ђăваш хушшинђе çавăн пек сарăлса кайни ăçтан килнĕ пулатха вăл? Пĕр йенђен —пирĕн вăрмансем пур, çавăнпа курăс та пулнă. Ăна çав пулăшнă пулмалла. Анђах унтан ытла ђăвашсене çав ĕçе ниçта кайса кĕме çукки ĕçлеттернĕ. Ђăпта ĕçĕ вăл йӳнĕ ĕç. Пурнăçа ытти майпа йӳнеçтерекен халăх вăл ĕçе ĕçлемест. Ђăвашсен пурнăç хĕстерсе çитнипе вăл ĕçе ирĕксĕрех ĕçлемелле пулнă. Тата ђăпта çапма нумайах вĕрĕнни мĕнĕ те кирлĕ мар. Пирĕн респуплĕкре ытти алăсталăх промыслисем те çакăн йевĕрлĕрехскерсем, тоххот сахалтарах параканскерсем. Анђах çапах та епĕр вĕсене: кусем тоххот сахал параççĕ, пăрахмалла кусене, теме пултараймастпăр. Хаљ çак вăхăтра, малашне те ђылай вăхăт, вĕсем вăрăнне урăх нимĕн те парайас çук. 40 пин çын вăйне ниçта шăнăçтарайманнине астăвас пулать. Çавсенех тоххотлăрах тума

тăрăшас пулаť,—вăл пĕр йенђен, тепĕр йенђен халăха тоххотлăрах аласталăхсене, ĕремессене вĕрентес пулаť.

Револђутсиђђен пирĕн респуплĕк вырăнђе вак промышлĕннăç, аласталăх промышлĕннăçĕ, тĕрлĕ ремессем йепле тăнине епĕр пĕтĕмпех тĕплĕ пĕлсе çитерейместпĕр, кирлĕ ђыхвăрсем çителĕклĕ çук. Краштăн вăрçи пĕтнĕ çулхине 20—21 ç., Халăх Хуçайстви Канашăн отђођĕ кăтартнă тăрăх ак çакăн пек йапаласене çакăн ђухлĕ хатĕрленĕ:

| | | |
|---|---|---|
| Куљпа ракуша | 1.500 | пин. |
| Катка пиђке | 6.000 | |
| Карçинккă | 35.000 | |
| Сăмала | 10.000 | пăт. |

Вăрçă ваљљи пирĕн вак промышлĕннăçпа аласталăх промышлĕннăçĕ ђылай йапала тăратнă, вăл йăвăр вăхăтра патшалăха нумай пулăшнă.

Унăн ун ђухнехи пурăнăçĕ çинђен пирĕн çителĕклĕ маттериалсем çук. Çавăнпа ун çинђен калама йăвăр.

Вăл тĕлĕшрен хаљтерех пухнă маттериалсем анђах. 1925-мĕш çулта пухнă маттериалсене хаљ пирĕн Статтисçтĕк Управленийĕ уйрăм кĕнеке туса кăларнă. Йулашки вăхăтра пухнă

маттериалсене хаљ тирпейлесех пĕтерейменха Çавăнпа пирĕн алăра çав маттериалсем анђахрах. Çав кĕнеке тухнă пиркийех кунта ђыхвăрсем нумайах çырмалли те çук. Епĕр çавăнпа та хутран ситрен анђах, кирлĕ таран, илсе пăхăпăр.

Вĕт промышлĕннăçпа алăсталăх промышлĕннăçĕ пирĕн респуплĕк халăх хуçайствинђе ђылай пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Хаљхи вăхăтра вĕсем çулталăкне 8 – 9 мĕлйун тенкĕлĕх йапала кăлараççĕ.

Вăл, вăрçăпа выçлăх вăхăтĕнђе нађарлансах çитнĕскер, аталанни курăнсах тăрат̆, вĕт, малтанах каланăђђĕ: выçлăх çул пĕр вăхăтра вăл пĕтĕмпех тенĕ пек сӳнсех ларнă, тенĕђђĕ.

1925-мĕш çулта, кĕркунне вĕт промышлĕннăçлă, алăсталăхлă хуçайствăсем респуплĕкĕпе 18.158 пулнă, мĕн пур хуçайствă пирĕн 173 пине йахăн. Çапла ĕнтĕ, кашни 10 хуçайствăран пĕри йепле те пулин промыслапа тăрмашат̆. Тĕрлĕ промыслапа тăрмашакан халăх 23 пинрен иртсе кайат̆.

Промыслаллă халăх йышлăхĕ тĕлĕшĕнђен пирĕн респуплĕк, пĕтĕм Сойусĕпе илсен, саккăрăмĕш вырăн йышăнса тăрат̆. 1) Арханкĕљск

кĕпĕрнинђе кашни 10 пин çынран 765 çын промыслапа тăрмашаҭ, 2) Нимĕђ респуплĕкĕнђе—569, Веткă кĕпĕрнинђе—556, 3) Мускав кĕпĕрнинђе—445, 4) Ивано-Воснеççенск кĕп.—400, 5) Волоктă кĕп.—392, 6) Ленинкрат кĕп.—356, 7) Ђулхула кĕп.—330, 8) Пирĕн респуплĕкре—319 çын.

Çак нумайах та мар ђыхвăрсенђенех пирĕн вĕт промышлĕннăç хуçайствăра мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине аван курма пулаҭ.

Тĕрлĕ промысласем, курнакантараххисемех, 80-ран иртсе кайаççĕ. Кунта епĕр мĕнле промысласем пуррине, вĕсемпе кашнипе мĕн ђул çын тăрмашнине, мĕн йапала тунине кăтартса парăпăр.

| | Мĕн ђул кил | Мĕн ђул çын ĕçлет | Мĕн хаклăх йапала кăлараҭ. |
|---|---|---|---|
| 1. Катка-пиђкесем . . . . . | 1004 | 1083 | 90120 |
| 2. Çăм атă йавалас ĕç . . . | 498 | 593 | 181562 |
| 3. Йĕке тăвакансем . . . . . | 20 | 20 | — |
| 4. Çил армансем . . . . . . | 1856 | 2095 | 2690341 |
| 5. Вĕрен йавас ĕç . . . . . | 34 | 37 | 2005 |
| 6. Шыв армансем . . . . . | 514 | 725 | 3194185 |
| 7. Пыршă ĕçлекен . . . . . | 1 | 1 | — |
| 8. Иçвĕс ĕçлекен . . . . . . | 2 | 18 | 440 |
| 9. Çăм йапала çыхакан . . . | 2 | 2 | — |
| 10. Хут купăс тăвакан . . . . | 1 | 1 | — |

| | Мĕн ђул кил | Мĕн ђул çын ĕçлет | Мĕн хаклăх йапала кă-ларат. |
|---|---|---|---|
| 11. Тараса тăвакан . . . . . | 1 | — | — |
| 12. Куршак ђашăк тăвакан . | 40 | 54 | 7541 |
| 13. Тура тăвакан . . . . . . | 5 | 5 | — |
| 14. Пĕкĕ авакан . . . . . . . | 56 | 109 | — |
| 15. Тимĕр витре тавраше . . | 218 | 226 | 21340 |
| 16. Калуш саплакан . . . . . | 1 | 1 | — |
| 17. Ађасене выљамалли . . . | 1 | 1 | — |
| 18. Пиђет тăвакан . . . . . . | 1 | 1 | — |
| 19 Кирпĕђ тăвакан . . . . . | 685 | 1610 | 127359 |
| 20. Урапа кусатăранĕ„ . . . . | 512 | 570 | 70383 |
| 21. Корçинккă „ . . . . | 422 | 464 | 31930 |
| 22. Калăп „ . . . . | 1 | 2 | — |
| 23. Кăлпасса „ . . . . | 14 | 35 | — |
| 24. Сăран „ . . . . | 63 | 87 | 49502 |
| 25. Канфет тавраше „ . . . . | 6 | 6 | — |
| 26. Ут арманĕ . . . . . . . . | 8 | 10 | 3700 |
| 27. Тĕрлĕ йапалана сăрлакан . | 5 | 6 | — |
